**ШЕТМĔ ШЫВĔ ХĔРРИНЧЕ**

Симĕс-симĕс улăхра
Пăс юхать – шăрçа тăкать.
Шурăмпуçĕ тухăçра
Вăй вылять, хĕвел тухать.

Ялкăшса хĕвел тухать,
Шетмĕ тăрăх хĕм тăкать,
Шетмĕ тăрах çул хывать
Ĕнчĕ  –  ылтăн çул хывать.

Шетмĕ шывĕ тĕк тăрать,
Кĕмĕл кăкăрĕ çине
Çил анать те – кустарать
Вĕтĕ-вĕтĕ хумсене.

Ĕнтĕ ял та вăранать
Канлĕ, тутлă ыйхăран.
Васкаса утса анать
Çăл патне пĕр хĕр туран.

Чиперук, чиперук!
Кун пек хĕр те пур, те çук, –
Утти  –  акăш утти пек,
Пĕвĕ – Шетмĕ хăви пек.

Колхозра çĕр çичĕ ут.
Çăмарта пек утсемпе
Çамрăк конюх та виç хут

Анчĕ ĕнтĕ çăл патне.

Çамрăк хĕр те – сисетре! –
Виçĕ хут шыва анать.
Шыв юхать, хăрах витре
Тулнă ĕнтĕ – тăкăнать.

Каччă меллĕн шăхăрать
Шыв ĕçеççĕ учĕсем.
Ну-и чăрсăр та вара
Каччăн харсăр куçĕсем!

Тутипе хăй шăхăрать,
Куçĕпе хĕре сăнать.
Тем юсать хĕр тутăра,
Хĕрелет хĕр – вăтанать.

Хĕрелет хĕр – пăлханать,
Юн çунать, вылять питре.
Шыв юхать, хăрах витре
Тулнă ĕнтĕ – тăкăнать...

Шартлатать ак калитке –
Çăл патне анать инке.
Хĕр йăтать витрисене:
– Тух эппин, – тет, – каçхине...

Чиперук, чиперук!
Кун пек хĕр те пур, те çук,
Утти – акăш утти пек,

Пĕвĕ – Шетмĕ хăви пек.

Каччă меллĕн шăхăрать
Тулхăраççĕ учĕсем.
Каччă хĕрĕ хыçĕнчен
Честь парса юлать: – Юрать!

Ёнтĕ ял шавлать, йăслать.
Грузовик таçтаваскать
Улăх тăрăх ыткăнать.

Улăх –
Сывлăмне такать.

1939

*Янкас, Н. Шетмĕ шывĕ хĕрринче / Н. Янкас // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н.Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 218.*